Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

62 (7379) № ✻ Юн кун, 2006 çулхи июлĕн (утă) 26-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Симĕс ĕç çи

**Районти хуçалăхсенче июлĕн 25-мĕшĕ тĕлне:**

**1. Нумай çул ӳсекен курăксем çулнă. 2.Утă типĕтсе хатĕрленĕ. 3.Сенаж хывнă. 4.Силос хывнă. 5.Кĕрхи культурăсем акма çĕр хатĕрленĕ (процентпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 | 5 |
|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 98 | 84 | 84 | | 26 |
| “Волга” | 96 | 78 | 0 | | 81 |
| “Восток” | 100 | 140 | | 71 | 18 |
| «Герой» | 84 | 45 | 83 | 96 | 0 |
| ЗАО “Агро-Урожай” | 100 | 100 | | | 0 |
| К. Иванов яч. хис. | 91 | 36 | 74 | 55 | 36 |
| Ильич яч. хис. | 98 | 77 | 123 | 100 | 17 |
| “Колос” | 90 | | | | 50 |
| Ленин яч. хис. | 99 | 93 | 320 | 0 | 67 |
| “Лидер” | 89 | 44 | 75 | 0 | 12 |
| ГУП ЧР “ПФ “Моргаушская” | 200 | | | | |
| “Нива” | 100 | 53 | 13 | | 5 |
| “Оринино” | 98 | 81 | 177 | 92 | 25 |
| “Передовик” | 39 | 30 | 44 | | 94 |
| “Свобода” | 100 | 45 | 60 | | 0 |
| “Сеятель” | 69 | 91 | 0 | | 0 |
| Суворов яч. хис. | 100 | 63 | 47 | | 70 |
| ООО АФ “Рассвет” | 77 | 39 | | 54 | 83 |
| ОАО АФ “Нива” | 81 | | | | 0 |
| “Ударник” | 100 | 40 | 150 | 7 | 38 |
| “Хлебороб” | 87 | 44 | 28 | | 63 |
| Чапаев яч. хис. | 83 | 75 | | 0 | 65 |
| «Чемеево» | 100 | 77 | | 59 | 0 |
| Чкалов яч. хис. | 94 | 96 | 0 | 69 | 80 |
| КФХ Михайлов А.Н. | 87 | 93 | 0 | | 180 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **88** | **60** | **73** | **51** | **41** |

***Район уй-хирĕсенче вырма ĕçĕсем тытăниччен вăхăт нумаях юлмасть. Çавăнпа та курăксене çулса пухас ĕçсене май пур таран хăвăртрах туса ирттермелле. Районĕпе вара нумай çул ӳсекен курăксене çулмалли татах 1200 гектар ытла.***

***Утă хатĕрлессипе те ытларах тимлĕх уйăрмалла. Чылай хуçалăхсенче ăна хĕл кунĕсем валли хатĕрлессипе плансене çурри чухлĕ те тултарайман.***

***«Волга», «Сеятель» хуçалăхсенче сенаж хывма пуçăнман-ха. Вăхăт вара иртет.***

## Суйлав умĕн

# Кандидата тăратнă

Иртнĕ эрне кун Шупашкарта “Пĕрлĕхлĕ Раççей” политика партийĕн Чăваш регион уйрăмĕн XI конференцийĕ пулса иртнĕ. Унта пĕр мандатлă округсем тăрăх республика Патшалăх Канашне депутата суйлама кандидатсем тăратнă.

8-мĕш Муркаш суйлав округĕпе (пирĕн районсăр пуçне кунта Элĕк районĕ те кĕрет) ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне суйлама “Муркаш районĕнчи тĕп больница” МУЗ тĕп врачне Владислав Григорьевич Данилова кандидата тăратнă.

**Конференци ĕçĕ пирки тĕплĕнрех 2-мĕш страницăра вулăр.**

## Республикăра

# Мускаври тĕл пулусем

Июлĕн 22-мĕшĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Николай Федоров Мускавра Казахстан Республикин Президенчĕпе Нурсултан Назарбаевпа тата Казахстанăн Раççейри Чрезвычайлă тата Полномочиллĕ посолĕпе Жансеит Туймебаевпа тĕл пулнă.

Калаçу вăхăтĕнче Чăваш Енпе Казахстан килĕштерсе ĕçлессипе, казах делегацийĕ Шупашкарта пулнă май тунă килĕшӳсене пурнăçлассипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе явнă. Нурсултан Назарбаев Николай Федорова çывăх вăхăтра официаллă визитпа Казахстан Республикине пыма чĕннĕ.

Çав кунах Николай Федоров Президент Раççей Федерацийĕн ял хуçалăх министрĕпе Алексей Гордеевпа курнăçнă. Тĕл пулура пысăк пĕлтерĕшлĕ “ПАК аталанăвĕ” наци проектне пурнăçлассипе, çавăн пекех федерацин 2007 çулхи бюджетĕнчен Чăваш Ене пысăкрах пулăшу кӳрессипе çыхăннă ыйтусене тишкернĕ. Алексей Гордеев республика ертӳçине агропромышленноç комплексне аталантарас енĕпе çине тăнăшăн тав тунă.

Республика пуçлăхĕпе федераци министрĕ çавăн пекех Чăваш Енпе Венгри ĕçтешлĕхне аталантарас ыйтусене сӳтсе явнă. Ку Алексей Гордеев çывăх вăхăтра ĕçлĕ визитпа Венгрие кайма палăртнипе çыхăннă. Раççей делегацийĕн йышне кĕме Чăваш Ен Президентне, пирĕн республикăн ĕçлĕ çыннисене те чĕннĕ.

## Районти выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче

# Ĕçе юратсан ăнăçу кĕттермест



Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Валентина Кирилловна Павлова виççĕмĕш çул “Передовик” хуçалăхра Хачăк Салинчи ĕне ферминче дояркăра вăй хурать, хăйне çирĕплетсе панă ушкăнри 28 ĕнерен продукци нумайрах илессипе тимлет. Унччен “Тораево” хуçалăхра 10 çул ĕне сунă çĕрте ĕçленĕ ĕçчен ĕç вăрттăнлăхĕсене те, авă, аван пĕлет. Хăйĕн пĕлĕвне вара Валентина Кирилловна çилпе вĕçтермест, чунĕпе юратакан ĕçне 5-мĕш класран вĕренсе тухнă хĕрне те ачаллах хăнăху парать. Сăмах май, Елизавета пĕлтĕрхи çуллахи каникулта та çăвĕпех амăшне пулăшма çӳрерĕ. Ĕне сăвасси хĕр пĕрчишĕн çĕнĕлĕх те, йывăрлăх та мар ĕнтĕ.



**Черетлĕ ял хуçалăх çулĕн пĕрремĕш çуррийĕ хыçа юлчĕ ĕнтĕ. Мĕн кăтартрĕ-ха вăл? Хуравĕ пĕрре: ĕçе юратса тимлĕрех ĕçлемелле, çĕнĕ технологисене ытларах алла илмелле. Эсир паянхи сăн ӳкерчĕкре çак хурава паракан ĕçченсен пĕр ушкăнне куратăр. Вĕсем (сулахайран сылтăмалла) Е. Андреев яч. хис. хуçалăхра 22 çул техник-осеменаторта ĕçлекен Р.П. Аксендарова, хуçалăхăн тĕп зоотехникĕ И.П.Воронов, дояркăри ĕç стажне пурĕ 29 çула çитернĕ Е.С.Афанасьева.**

**Паянхи манăн сăмахăм выльăх пăхакан вуншарçĕршер ĕçченшĕн тĕслĕх пулса тăракан Раиса Павловна Аксендарова пирки. Иртнĕ çул вăл 100 ĕне пусне 86 пăру илнĕ. Хăй каланă тăрăх ку вăл вунă çул каялла хăй ферма заведующийĕ пулнă чух тунă кăтартуран пĕчĕкрех. “Апла пулин те пуçа усма иртерех, ĕçлеме условисем пур”,– тет яланах малашлăха шанакан Р. Аксендарова. Шанать те, хăйне колхозри пĕр пăрăва сыватнине курнă хыççăн 1970 çулта Евтихий Андреевич Андреев, ветеринар пире те кирлĕ пулать тесе, Патăрьелĕнчи ветучилищĕне вĕренме янине хăйĕн ĕç тĕллевĕ тесе палăртать. 36 çул каялла çуралнă çак тĕллев Раиса Павловнăшăн пурнăç çулĕ пулса тăнă. Завфермăра, осеменаторта, лаборантра, ветеринарта ĕçленĕ-и – яланах пахалăх малти вырăнта пулнă. Çавăнпа та вăл ертсе пынă Çурлатри ферминче час-часах республика шайĕнчи ăмăртусем иртнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар.**

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕсем.**

# Чăваш Ен – чи лайăххисен шутĕнче

Николай Федоров Президент хушнипе июлĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Николай Смирнов Правительство членĕсемпе тата Федераци ведомствисен территори органĕсен ертӳçисемпе тунти кунсерен йăлана кĕртнĕ канашлу ирттернĕ.

Н. Смирнов иртнĕ эрнере республикăн Патшалăх Канашĕн комитечĕсен ларăвĕ иртни çинчен пĕлтернĕ, унта республикăн кăçалхи бюджетне улшăнусем кĕртесси çинчен калакан саккун проектне ырланă.

Утă уйăхĕн 26-мĕшĕнче Министрсен Кабинечĕн ларăвĕ иртмелле, унта 2006 çулăн пĕрремĕш çурринче республика бюджетне мĕнле пурнăçланине, социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн кăтартăвĕсене тишкерме палăртнă. Н. Смирнов министрсене отрасльсенчи лару-тăрăва тиркевлĕ куçпа хакласа калаçмаллине, аталану валли кирлĕ пайăр сĕнӳсем памаллине аса илтернĕ. Бюджетăн тупăш пайне иккĕмĕш çур çулта та çулталăкăн пĕрремĕш çурринчи пек ӳсĕм упранса юласса тĕпе хурса палăртнă. Промышленноçпа энергетика министрĕ Юрий Волошин палăртнă тăрăх, пĕрремĕш çур çултан Чăваш Енри промышленноç производствин индексĕ 109,6 процентпа танлашнă. Раççейĕн вăтам кăтартăвĕ 104,4 процент.

ЧР Президент Администрацийĕн Ертӳçи Энвер Аблякимов канашлăва хутшăннисене ЧР Президенчĕ Н. Федоров Раççей Патшалăх канашĕн ларăвне хутшăнни çинчен пĕлтернĕ. Ăна Кремльте В. Путин Президент ирттернĕ. Регионсен социаллă пурнăçпа экономика аталанăвне планлас енĕпе ĕçлекен ушкăн ертӳçин, Красноярск крайĕн кĕпĕрнаттăрĕн А. Хлопонинăн докладĕнче социаллă пурнăçпа экономикăна федераци органĕсемпе килĕшсе тĕплĕн прогнозлакан 9 региона асăннă. Çав шутра – Чăваш Республикине те.

Э. Аблякимов çавăн пекех Чăваш Ен административлă реформа енĕпе тăратнă 5 проектран 4-шĕ федераци конкурсĕнче çĕнтерни çинчен пĕлтернĕ.

Э.Аблякимов палăртнă тăрăх, республикăн ĕç тăвакан органĕсен пысăк пĕлтерĕшлĕ тивĕçĕ – патшалăх управленийĕн системин тухăçлăхне ӳстересси, унăн ĕç-хĕлне виçеллĕ тăвасси, патшалăх кӳрекен пулăшу ĕçĕсен пахалăхне лайăхлатасси.

Президент Администрацийĕн Ертӳçи иртнĕ эрнере “Пĕрлĕхлĕ Раççей” партин Чăваш регион уйрăмĕн XI конференцийĕ пулни çинчен пĕлтернĕ.

Планеркăра çавăн пекех çивĕч ытти ыйтăва тишкернĕ.

**ЧР ПА пресс-служби.**

## 01 пĕлтерет, асăрхаттарать

# Юсавсăр мăрье – пушар сăлтавĕ

Пушар хăрушсăрлăх правилисене çын куççулĕпе çырнă тетпĕр пулсан та, пирĕн хушăмăрта çав правилăсене пăхăнассине иккĕмĕш вырăна хăваракансем те тĕл пулаççĕ-ха. Кайран вара чавса çывăх та çыртма çук.

Вăрăран юлать те пушартан юлмасть, тенинче “хĕрлĕ автанăн” хăрушлăхне яр уççăн кăтартнă. Вуншар, çĕршер çул ăруран ăрăва пухнă пурлăх самантрах кĕлленни кирек камшăн та чăтма çук йывăр хуйхă пулни каламасăрах паллă. Çакна ăнлансан, сыхлану та тивĕçлĕ шайра пулмалла. Анчах... Районта тухакан пушарсен сăлтавĕсене тишкерсен вара çынсем асăрханулăха малти вырăна хуманни курăнать. Акă кăçалхи 31 пушартан 7-шĕнче уçă çулăмпа асăрханусăр пулни, 7-шĕнче электрооборудование эксплуатацилес правилăсене пăсни, 6-шĕнче ӳсĕр пулни, 4-шĕнче юсавсăр кăмакасемпе тата мăрьесемпе усă курни каялла тавăрма çук инкек патне илсе çитернĕ. Районта тухнă юлашки пушарта та юсавсăр мăрье инкек çăл куçĕ пулчĕ. Çак сăлтавпа июлĕн 22-мĕшĕнче Москакасси ял тăрăхĕнчи Анаткас Хачăкри В. Алексеев хуçалăхĕнче пĕр çивитти айĕнче вырнаçнă мунча, гараж, ампар тата çуллахи кухня кĕлленчĕç. Каламалла, пушарнăйсен çаврăнăçулăхĕ кăна “хĕрлĕ автана” сарай çине куçса ытти хуралтăсене хăй тыткăнне илме памарĕ. Кунта çакна та асилтерсе хăвармалла, мăрье юсавсăрлăхне пулах икĕ эрне каялла Турай ял тăрăхĕнчи Уйкасра икĕ кил хуçалăх кĕл пулчĕ. Çакна шута илсе çу кунĕсем хыççăн кĕрпе хĕл çитнине шута хурса мăрье-кăмакасене юсасси çине паянах тимлĕрех пăхасчĕ.

**О. ЕФИМОВА,**
**37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн хăрушсăрлăх профилактикин инструкторĕ.**

## Юбилей

# Саламлатпăр

**Елена Николаевна СЕМЕНОВА** районти тĕп больницăра чылайранпа тăрăшать. Врач-терапевт, профпатолог пулнă май, професси чирĕсене тупса палăртса кирлĕ пулăшу парассипе нумай тимлет. Ĕç опычĕ те унăн пĕчĕк мар.

Тин çеç медицина училищине вĕренсе пĕтернĕскере мана вăл иккĕмĕш анне вырăнĕнче пулсах хăй патне ĕçе илчĕ. 18 çул ĕнтĕ ĕçлетĕп унпа çума-çумăн.

Июлĕн 28-мĕшĕнче Елена Николаевна 55 çулхи юбилейне паллă тăвать. Çав ятпа эпĕ ăна чун-чĕререн саламлатăп, ырлăх-сывлăх, телей, тату пурнăç сунатăп. Эпĕ çеç мар, коллективра пĕрле ĕçлекенсем те, тус-юлташĕсемпе тăванĕсем те манпа пĕр шухăшлă пуласса шанса тăратăп.

**Салампа Лариса.**